26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 МАРТ 24 ЮНКУН 65(6302) 15

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Çуракине хăвăртрах тата тĕплĕнрех хатĕрленсе çитер

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XIV-мĕш пленумĕ Чкаловски тата Вăрмар районĕсенчи колхозсемпе МТС-сен çуракине мĕнле хатĕрленни çинчен сӳтсе явнă.

Партин Чкаловски тата Вăрмар райкомĕсен комитечĕсен, кунти совет тата çĕрĕç органĕсен ВКП(б) Обкомĕн иртнĕ пленумĕ «1942-мĕш ялхуçалăх çулĕн итогĕсем тата 1943-мĕш çулхи çуракине хатĕрленесси задачисем çинчен» йышăннă решенине пурнăçласа тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнман, хăйсен районĕсенчи МТС-семпе колхозсене халĕ те çуракине хатĕрлесе çитермен.

Çуракине тухиччен шутлă кунсем кăна юлнă пулин те, Чкаловски районри колхозсенче вăрлăх пĕтĕмпе те 59,3 процент, кантăрвăррин вăрлăхне — 69,5 процент, çĕрулми — 88,5 процент, вика вăрлăхне — 73,8 процент кăна хывса хăварнă. Вăрмар районĕнче те çавăн пекех тăрăççĕ.

Партин çав районсенчи комитечĕсемпе райисполкомĕсем çитмен вăрлăха колхозсенчи мĕнпур ресурсене мобилизацилесе тупса çитерме тăрăшман, ку çеç те мар, çав районсенче пани кунчен те аван çапса пĕтермен. Колхозсен хушшинче вăрлăхсем улăштарса илес ĕçе организацилемен. Хăшпĕр колхозсем вăрлăхсене государство е ытти колхозсем парассине кĕтсе лараççĕ. Сăмахран, Вăрмар районĕнчи Карл Маркс ячĕпе таракан колхозра тырпула ĕçкунĕсем çине тăрĕссине ытлашши валеçсе пĕтернĕ. Колхоз вăрлăхсене вара 40 процент кăна хывса хăварнă.

Анчах районсенчи чылай колхозсене вăрлăхсен шăтас пахалăхе начар. Чкаловски районри «Ударник» колхозра тулă вăрлăхĕ 71 процент, пăрса—69,7 процент, вика—53 процент кăна шăтаççĕ. Нумай колхозсене çĕрулми вăрлăхне те начар усраççĕ.

Çавăн пекех асăннă районсенче МТС-сене, вĕсенчи тракторсемпе машинăсене, колхоз лашисене, ялхуçалăх инвентарĕсене çуракине начар та çителĕксĕр хатĕрлеççĕ. Чылай колхозсенче лашасене начар пăхаççĕ.

Чкаловски тата Вăрмар районсен руководителĕсем хĕллехи агротехникăлла мероприятисене пурнăçа кĕртессине хакламан, вăйлă тырпулăшăн колхозниксене кĕрешĕве мобилизацилемен, выранти тата минераллă удобренисем хатĕрлесе турттармалли плана пурнăçа кĕртессишĕн, уйхирте юр тытса хăварассишĕн çине тăрса ĕçлемен, çавăн пекех вĕсем калчасене çуркунне апатлантарма, яровизаципе протравливани тума та начар хатĕрленеççĕ.

Çав икĕ район çуракине хатĕрленес ĕçре кая юлса пыни унти парти райкомĕсемпе райисполкомсем колхозсене начар ертсе пынинчен килет. Вĕсем колхозсен ĕçне çителĕксĕр хутшăнаççĕ, çуракине хатĕрленес ĕçри пысăк çитменлĕхсене пĕтермешкĕн вăхăтра мерăсем йышăнмаççĕ. Колхозниксем хушшинче туса пыракан массăллă-политикăллă ĕçе государствăн питех те кирлĕ задачисене пурнăçа кĕртессипе çыхăнтарса пымаççĕ, кăçалхи çуракине ăнăçлăн хатĕрленсе ирттерессишĕн, 1943 çулта вăйлă тырпул туса илессишĕн колхозниксене кĕрешĕве мобилизацилемеççĕ.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ партин Чкаловски тата Вăрмар райкомĕсен секретарĕсене — Валеевпа Смирнов юлташсене, райисполкомсен председателĕсене — Шарафутдиновпа Биктемиров юлташсене, вĕсем колхозсемпе МТС-сене çуракине хатĕрлес тĕлĕшпе начар ĕçленине кăтартса парса, палăртнă пысăк çитменлĕхсене çывăх вăхăтсенчех пĕтерме, МТС-семпе колхозсене çурхи уйхир ĕçĕсене тумашкăн тĕплĕн хатĕрлесе çитерме хушса хăварчĕ; çак решение вăхăтра пурнăçа кĕртмесен, асăннă райкомсен секретарĕсемпе райисполкомсен председателĕсен тĕлĕшĕпе çирĕп мерăсем йышăнасси çинчен асăрхаттарнă. Çак кăтартусене ытти районсен руководителĕсем те шута илме тивĕçлĕ.

Нумаях пулмасть СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Государствăна 1943 çулта ялхуçалăх аталантармалли плана çинчен» постановлени йышăннă. Партипе правительство вăрçă вăхăтĕнчи вăйлă тырпулăшăн пыракан кĕрешӳре, ертсе пыракан организацисенчен пуçласа колхоз бригадирĕ, рядовой колхозник патне çитиччен, камăн мĕн тумалли анлăн та тĕплĕн кăтартса панă. Çав постановлени пурнăçĕн те закон пулса тăрать.

ВКП(б) Обкомĕн XIV-мĕш пленумĕ партипе совет тата çĕрĕç органĕсене çапла тума хушса хăварчĕ: СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн йышăннă постановлени çуракине хатĕрлесе ирттерес пĕтĕм ĕçĕн тĕп никĕсне хумалла тата ăна пĕр сăмахсăрах пурнăçа кĕртмелле. Кашни МТС-ăн, колхозăн, бригадăн, партипе правительство кăтартса панă тăрăх, хăйсен татăклă ĕç планĕсене тумалла, тата ĕç вăйĕсене тĕрĕс вырнаçтарса тухмалла.

Кăçалхи апрелĕн 1-мĕшĕччен çурхи вăрлăхĕсене пĕтĕмĕшлех хывса çитерес пулать. Вăрлăхсен пахалăхне тата вĕсен мĕнле упранине хуллен, тĕплĕн тĕрĕслесе тăмалла. Вăрлăхсене уйрăм акт тăрăх довоцник аллине памалла. Çав вăхăттĕнех начар шăтакан вăрлăхсене Заготзерно, Госсортфонд пунктĕсенче тата урăх колхозсенче лайăх вăрлăхсемпе улăштарса çитерес ĕçе туса çитерес пулать. Колхозсем пĕр-пĕринпе вăрлăхсем улăштарас ĕçе уйрăмах анлăн организацилемелле. Çавăн пекех çĕрулми вăрлăхне те çителĕклĕ таран хатĕрлесе хурас пулать.

Машинăсемпе тракторсен паркне, сухаламалли, акмалли хатĕрсене, транспорт инвентарĕсене юсас ĕçе кая юлнине пĕтерес пулать. МТС-семпе колхозсенче машинăсене ялхуçалăх инвентарĕсене мĕнле юсанине тăкăнах тĕрĕслесе тухмалла. Палăртнă çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтермелле.

Партипе правительство мартăн 25-мĕшĕнчен пуçласа колхозсемпе совхозсенчи лашасене трудгужповинноçран хăтарма йышăннă. Колхозсем çурхи уйхир ĕçĕсене тухиччен виçĕ эрне малтан мĕнпур лашасене вăйлă апат çине, канма тăратмалла. Вăйсăрланса çитнĕ тата чирлĕ лашасене ĕçрен халех хăтарса, вĕсене сыватма тытăнас пулать. Çурхи уйхир ĕçĕсен тапхăрĕ валли выльăх апачĕсем уйăрса çирĕп фонд туса хумалла. Кашни колхозра ĕç мĕн чухлине кура, сĕт сахал паракан ĕнесене, хĕсĕр ĕнесене, вăкăрсене ĕçе вĕрентмелле.

Çуракине тухаччен шутлă кунсем кăна юлаççĕ. Вăхăт сахал, тумалли ĕçсем нумай-ха. Çав ĕçсене партипе правительство хăйсен постановленийĕнче, ВКП(б) Чăваш Обкомĕн пленумĕ хăйĕн решенийĕнче кăтартса панă.

ВКП(б) Обкомĕн XIV-мĕш пленумĕ мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, МТС-семпе совхозсенчи работниксене çуракине хатĕрленес ĕçе хăвăртрах вĕçлесе çитерме чĕнчĕ.

Çуракине ăнăçлăн туса ирттерессишĕн, хамăрăн уйхирсенче вăйлă тырпул туса илессишĕн май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва анлăнрах сарар. Çĕршывпа фронта тырпул, çĕрулми, пахча-çимĕçсем, промышленность валли — чĕртавар кăçал татах та ытларах парар, çапла вара фашистла захватчиксене хăвăртрах çапса аркатма хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çара çĕнĕ вăй-хăват кӳрер!

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 22-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Мартăн 22-мĕшĕнче пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех çапăçса пынă.

* * *

Мартăн 21-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен 20 танкне çити тата войскăсемпе грузсем тиенĕ 100 автомашина ытла пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 6 складне сирпĕтсе янă, тăшманăн полевой тата зенитнăй артиллерин 10 батарейине пусарса лартнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем малалла тапăнса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Пĕр чаçăн боецĕсем хаяррăн çапăçнă хыççăн тăшмана Днепр шывĕн рубежĕ çинчен ывăтса янă. Нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. 4 оруди, пулеметсем, винтовкăсем, боеприпассем, 8 тягач, 25 автомашина тата ытти çар хатĕрĕсем те тытса илнĕ.

* * *

Жиздрыран çурçĕртерехре артиллерипе миномётсенчен персе тăрса контратакăсем туса тăшманăн темиçе хаяр атакине сирсе пăрахнă. Пирĕн оборона линине татса кĕрес тесе ăнăçсăр хăтланнипе нимĕçсем йывăр çухатусем тӳсеççĕ. Виçĕ кун хушши пынă çапăçусенче çак участокра тăшманăн 5.500 салтакпа офицер вилнĕ. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерирен персе тăрса нимĕçсен 11 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Белый хулинчен кăнтăртарахра пирĕн войскăсем малалла тапăнса пырса халăх пурăнакан 40 пункта йышăнса илнĕ. Тăшман хирĕç тăмалли вăйлă узел туса хунă пĕр высота районĕнче ытла та хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Пĕр чаçăн боецĕсем хăюллă маневрсем туса нимĕçсен оборонине аркатса тăкнă та çав высотана тытса илнĕ. Нимĕçсен çĕре чавса лартнă темиçе танкне, артиллерипе миномётсен батарейисене тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Белгород районĕнче пирĕн войскăсем тăшманăн танкĕсемпе мотопехотине хирĕç оборонăллă çапăçусем туса пынă. Нимĕçсем пирĕн оборонăна татса кĕме хăтланни ăнăçсăр пулнă. Пĕр чаçăн соединенийĕсем персе тăнипе тăшмана чарса лартнă. Вăл пысăк çухатусем тӳснĕ. Пĕр участокра кăна гитлеровецсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 8 танкне персе çĕмĕрнĕ тата 5 танкне çунтарса янă. Тепĕр районра юхан шыв урлă каçма хăтланнă гитлеровецсен пур атакисене те сире-сире пăрахнă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре Пономарев юлташăн подразделенийĕ оборонăланă участока тăшман атакăланă. Нимĕçсене сывăхах ярса, пирĕн боецсем вăйлăн пеме пуçланă та 100 ытла гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ.

Совет летчикĕсем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 6 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Смоленск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ мирлĕ совет çыннисене каторгăна илсе каякан 300 нимĕç салтакне тапăннă. Хурала вĕлерсе пĕтерсе, партизансем совет гражданĕсене фашистла тыткăнран хăтарнă тата 8 автомат, 40 винтовка тытса илнĕ. Тепĕр кун çав отрядах нимĕçсен карательнăй отрядне тапăннă. Çапăçура партизансем нимĕçсен 100 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе тăкнă.

* * *

Смоленск облаçĕнчи Давыдково ялĕнчи учительница Татьяна Оглоблина нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсен тискер ĕçĕсем çинчен çапла каласа панă: «Мартăн 3-мĕшĕнче нимĕçсем персе вĕлерессипе хăратса Давыдково, Астахово, Арденево, Тазово, Дровники, Курово, Черепки тата ытти ялсенчи пур çынсене те тыла хăвалаcа кайнă. Çĕрле пĕр сехет çитнĕ çĕре эпир Минкино ялĕ патне çитрĕмĕр те тултах çывăрма выртрăмăр. Пире тӳсме тивнĕ пур йывăрлăхсене каласа пама та çук. Ачасем кăна мар, çитĕннисем те макăратчĕç. Кăнтăрла пĕр сехет çитсен нимĕçсем пурне те тăратрĕç те малалла хăвалаcа кайрĕç. Вĕсем питĕ васкататчĕç, персе вĕлерессипе хăрататчĕç, пире хăвăртрах утма хушатчĕç. Кая юлакансене прикладпа çапса хăвалатчĕç. Нимĕçсем темиçе хут та пеме пуçларĕç. Хĕрлĕ Çар чаçĕсем сывăхра пулнине пĕлсе, эпир мĕн май килнĕ таран ерипентерех утма тăрăшрăмăр. Царево-Займище ялĕ патне пырса çитнĕ чухне çывăхрах «урра» кăшкăрни илтĕнчĕ. Нимĕç патрулĕ тарса пытанчĕ. Çак пысăк ушкăн пĕтĕмпех землянкăсемпе блиндажсене кĕрсе тулчĕ. Часах эпир тăван ырăс чĕлхипе калаçнине илтрĕмĕр. Яла красноармеецсем кĕчĕç. Кунта нихăçан манмалла мар тĕлпулу пулса иртрĕ. Совет воинĕсем пире тискер хăрушă вилĕмрен хăтарчĕç».

Мартăн 23-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Мартăн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех çапăçса пынă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пĕр соединенин чаçĕсем çине тăрса çапăçнă хыççăн халăх пурăнакан çирĕп тĕреклетнĕ 3 пункта йышăнса илнĕ. Çухатнă позицисене каялла тавăрас тесе, нимĕçсем контратака тунă, анчах та пысăк çухатусем тӳссе вĕсен каялла чакмалла пулнă. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем тăшман автоматчикĕсен ротине пĕтерсе тăкнă, 3 противотанковăй оруди, 5 пулемет, 120 автомат тата винтовкăсем тытса илнĕ.

* * *

Белый хулинчен кăнтăртарахра пирĕн войскăсем малалла тапăнса пырса халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Пĕр чаçăн боецĕсем тăшман контратакине сирсе янă та каялла чакакан гитлеровецсен хыçĕнченех халăх пурăнакан пункта вăркăнса кĕнĕ. Штык вĕççĕн çапăçнă хыççăн нимĕçсене çав пунктран хĕссе кăларнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 200 ытла вилли выртса юлнă. Тăшмантан миномётсен 2 батарейине, 11 пулемет, боеприпассен складне тата радиостанци тытса илнĕ.

* * *

Белгород районĕнче пĕр чаçăн соединенийĕсем хаяр çапăçура 6 танк тата тăшман пехоти ларса пыракан 25 автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн артиллеристсем тĕрлĕ грузсем тиенĕ 15 автомашинăна пĕтерсе тăкнă тата артиллерин 2 батарейине пусарнă.

* * *

Чугуев районĕнче пирĕн чаçсем тăшмана хирĕç персе тăнă. Совет артиллеристчĕсем нимĕçсен йывăр танкне тата 2 орудине персе çĕмĕрнĕ, нимĕç пехотин пысăк колоннине сапаласа янă. Тепĕр участокра гитлеровецсем атака тунă, анчах пысăк çухатусем тӳссе каялла чакнă.

* * *

Кубань çинче пирĕн летчиксем пĕр кун хушшинче сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 15 самолетне персе ӳкернĕ. Кунсăр пуçне зенитнăй артиллери тăшманăн 3 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ çĕрле нимĕç гарнизонне тапăннă. Партизансем гитлеровецсем вырнаçнă 2 çурта вут тĕртнĕ те нимĕçсен 40 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Ленинград партизанĕсен тепĕр отрячĕ фронт линине каякан икĕ çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Икĕ паровоз, çынсем ларса пыракан тата техника тиенĕ 49 вагонпа платформăна аркатса тăкнă. Ваннă вагонсем айĕнче тăшманăн 100 салтакĕпе офицерне çити вилсе пĕтнĕ.

* * *

Аяларахра эпир нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Калинин облаçĕнчи Ржев хулинче тискер ĕçсем туни çинчен çырнă акта пичетлетпĕр.

«Нимĕç оккупанчĕсем Покровски чиркĕве тустарса мăшкăлларĕç. Вĕсем хăйсен ирĕкĕпех чиркӳ алăкне ватса кĕнĕ те унта салтаксем валли казарма тунă, чиркӳри хаклă япаласене вăрласа пĕтернĕ. Нимĕç чунилленĕсем Покровски чиркĕвĕн священникне Андрей Попова персе вĕлернĕ. Каялла чакас умĕн фашистла çынвĕлеренсем чиркӳ айне минăсем лартнă та чиркĕве 200 çынна яхăн хăваласа кĕртнĕ. Чиркĕве кĕме килĕшмен е чирлĕ пирки унта çитме пултарайман хĕрарăмсемпе ачасене «нимĕçсен çар влаçĕсене пăхăнманшăн» гитлеровецсем персе пăрахнă. Çынсене чиркĕве хăваласа кĕртнĕ хыççăн нимĕçсем алăксене тачă хупса питĕрсе илнĕ те чиркӳ çуртне сирпĕтсе яма хатĕрленнĕ. Хулана вăркăнса кĕнĕ Хĕрлĕ Çар чаçĕсем гитлерла варварсене чиркĕве унта пулнă çынсемпе пĕрле сирпĕтсе яма паман». Акт çине çаксем алă пуснă: Покровски чиркӳ старости Долгополов, дьякон Тихомиров, хула çыннисем Садовникова, Денисова, Морозова тата ыттисем те.

ÇУРАКИНЕ БОЛЬШЕВИКЛА ХАТĔРЛЕНСЕ КĔТСЕ ИЛЕР

Колхозсем çулталăк отчетне турĕç

СОВЕТСКОЕ. (Телефонпа). Пирĕн районра 83 колхоз. Мартăн 15-мĕшĕ тĕлне пур колхозсем те 1942-мĕш ялхуçалăх ĕçĕсен отчетне туса, тупăш валеçес ĕçе вĕçлерĕç. Нумай колхозсенчи счетоводсем 1942 çулта хăйсен ĕçне вăрçă вăхăтĕнчи ответлăхпа туса пычĕç. Колхозсен учетпа отчет ĕçне çирĕплетрĕç.

Çулталăкри отчетсем тунă çĕрте уйрăмах «Урожай», «Майăн 1-мĕшĕ» тата ытти колхозсен счетовочĕсем лайăх ĕçлерĕç. Счетовод Андрей Кириллов хăйĕн колхозĕнче отчет тунă хыççăн «Красное Сормово» колхоза отчет çырса пачĕ. Наумов юлташ Максим Горький колхозра çырнă хыççăн «Красный пахарь», «Сталинград» колхозсене те отчетсем çырса пачĕ.

Пирĕн колхозсем иртнĕ çул вăйлă тырпул туса илчĕç. Тĕслĕхрен, «Сеятель» колхоз колхозниксене кашни ĕçкунĕ пуçне 4,5 килограмм тырă тата 7 тенкĕ те 40-шер пус укçан валеçсе пачĕ.

Халĕ колхозсем çуракинче паха вăрлăхсем акма хатĕрленеççĕ, пĕрпĕрине вăрлăхсем парса пулăшаççĕ. «Сеятель» колхоз «Хастар» колхоза кивçен 35 центнер вăрлăх тырă пачĕ. «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз та «Красный Октябрь» колхоза 32 центнер сĕлĕ парса пулăшрĕ.

Март уйăхĕнче районра колхоз председателĕсен тата счетоводсен канашлăвĕсене туса ирттертĕмĕр. Вăл канашлусенче колхозсен çулталăкри производствăллă планĕсене тăвас ыйтăва сӳтсе явнă. Счетоводсене учетпа отчет ĕçĕсене кăçал епле туса пымалли çинчен кăтартусем панă. Колхоз счетовочĕсем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва тухса хăйсем çине конкретлă обязательствăсем илчĕç. Унтанпа 10 кун иртрĕ ĕнтĕ, 40 колхоз хăйсен 1943 çулти производствăллă планĕсене, приходпа расход сметисене турĕç.

К. Арсентьев.

Начар ĕçлеççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. «Маяк» колхоз председателĕ хăйĕн ĕçне иртнĕ çулта тунă çитменлĕхсене шута илсе туса пымасть. Кăçал та вăйлă тырпул туса илессишĕн кирлĕ пек кĕрешмеççĕ. Колхоз çуракине хатĕр мар. Паянхи куна пурĕ те 4 плуг çеç юсанă. Выранти удобренисене пачах пухман.

С. Шадин.

ХАЛĂХĂН ÇĔНĔ СТРОЙКИ

Салар арыкĕ çинче Ташкент ĕçхалăхĕ гидроэлектростанци тума пуçланă. Çĕр ĕçĕсене, бетонпа монтаж ĕçĕсене предприятисен, учреждениcемпе организацисен коллективĕсен вăйĕпе тума шутланă. Вĕсем стройкăна хăйсен бригадисене уйăрса яраççĕ.

Пирвайхи кунах çĕр ĕçĕсене 1000 çын ытла хутшăннă. Çывăхри кунсенчех стройкăра ĕçлекенсен хисепĕ 6.000 çынна, апрель уйăхĕнче 11.000 çынна çитмелле. Çĕнĕ гидроэлектростанцие 8 уйăх хушшинче туса çитермелле. Вăл Узбекистан столицинчи халăха пурне те çителĕклĕ таран электроэнерги парса тăмалла. (ТАСС).

СИЛОС ЛАЙĂХ УПРАНСА ТĂНĂ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Иртнĕ çулта Янкассинчи Буденный ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсемпе çамрăксем силос нумайрах хывса хăварассишĕн çине тăрса ĕçлерĕç. Колхозăн фермисенчи выльăхĕсем валли вĕсем 90 центнер силос хатĕрлесе хăварчĕç. Çав силоса халь выльăхсене çитерме пуçларĕç ĕнтĕ. Силос пахалăхĕ питĕ те аван, вăл аван упранса хĕл каçнă. Сĕтеклĕ апата выльăхсем юратса çиеççĕ.

Н. Виноградов.

Лайăх лашасем ӳстерсе панăшăн фронтовиксем тав тăваççĕ

Республикăри колхозсем пĕтĕм вăйпа фронта пулăшма тăрăшса, Хĕрлĕ Çар валли лайăх лашасем ӳстерсе параççĕ, çапла вĕсем тăшмана хăвăртрах пĕтерсе тăкма пулăшаççĕ. Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсем çакăншăн республикăри ĕççыннисене тав тăваççĕ. Çак кунсенче Облвоенком полковник Алексеев юлташ ячĕпе телеграмма килнĕ. Унта çапла çырнă: **«Пирĕн çар чаçĕ Чăваш республикинчи колхозсене вĕсем лайăх лашасем ӳстерсе панăшăн тав тăвать. Часть командирĕ РУДЧУК».**

САМОЛЕТСЕН ЭСКАДРИЛЬИНЕ ТУМА

Калининăри педучилищĕре вĕренекенсем самолетсен «Советский физкультурник» эскадрильине тума укçа пухаççĕ. II-мĕш «В» класра малтанхи кунах 266 тенкĕ пухрĕç. Кашни вĕренекенех 20—30 тенкĕрен кая мар пачĕç. Укçа пухасси ытти классенче те пырать.

Т. Филиппов.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене пани

Çак кунсенче ВКП(б) Чăваш обкомĕн секретарĕ, СССР Верховный Совечĕн депутачĕ И. М. Чарыков юлташ Çĕмĕрле комбинатĕнчи наградăланă рабочисене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене пачĕ.

Производство заданийĕсене ăнăçлăн пурнăçланăшăн грамотăсем çаксем илчĕç: заводри главнăй инженер С. Б. Слуцкий, смена мастерĕ П. А. Анисимов, мастер А. А. Григорьев, К. И. Данилова, А. И. Кондратьева, механик А. М. Гутник, старши мастер А. А. Иванов.

Хăйĕн ответлă сăмахĕнче Гутник çапла каларĕ: эпир тылри работниксем, кашни харпăрхăй участокĕнче начар мар ĕçлерĕмĕр. Чăваш АССР правительстви пирĕн ĕçе паллă турĕ. Малашне эпир, — тет Гутник юлташ, — фронта пулăшассине ӳстерес тĕлĕшпе, нимĕç захватчикĕсене хăвăртрах аркатса тăкас тĕлĕшпе пĕр ывăнма пĕлмесĕр ĕçлĕпĕр. Награда илнисен ячĕпе Чăваш АССР Верховный Совет Президиумне тата ВКП(б) Чăваш Обкомне çапла шантарса калатăп: правительство панă кирек епле задание те пурнăçлама, пысăк пахалăхлă продукци туса кăларма эпир яланах хатĕр.

Производствăра стахановла ĕçленĕшĕн грамотăсем çаксем илчĕç: С. М. Емелин тата А. П. Порфирьев фрезеровщиксем, слесарь-монтажник В. А. Кондауров, токарь-лекальщик Н. И. Корнеев, полировщица О. К. Каракозова, слесарь В. Д. Краснощеков, И. А. Кузнецов, И. А. Монастырский, В. Л. Пастухов, М. А. Полукаров, С. И. Шарасыкин, сборочнăй цех начальникĕ П. Ф. Павлов, тимĕрçĕ С. М. Кузьмин, пăхарçă Н. Т. Назаров.

Грамотăна алла илсе, Каракозова юлташ çав тери шаннăшăн тата награда панăшăн партие, правительствăна тата аттепе чи сывăх туса— Сталин юлташа пысăк тав турĕ.

— Пирĕн хĕрарăмсемпе хĕрсем хăйсен пурнăçне шеллемесĕр отечественнăй вăрçă фрончĕсенче çапăçаççĕ. Эпир кунта, тылра, хамăр вăя шеллемесĕр, вăхăта шутламасăр, фронта пĕр чарăнмасăр пулăшса тăрас, гитлерла çĕлен-калтасене аркатса тăкас сехете çывхартас тесе ĕçлĕпĕр. Кирлĕ пулсан эпир пурте хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çар ĕретне тăрса, отечественнăй вăрçă фрончĕсене çапăçма кайма хатĕр, — терĕ Каракозова юлташ.

Завода ăнăçлăн ертсе пынăшăн завком председательне тата завод директорне Хисеплĕ грамотăсем панă.

Районри промышленноçа ăнăçлăн ертсе пынăшăн грамотăна ВКП(б) райком секретарĕ В. Г. Григорьев юлташ илчĕ.

Юлашкинчен ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ наградăланисене Хисеплĕ грамотăсем илнипе саламларĕ тата ĕçре малашне те ăнăçусем туса пыма сунчĕ.

Фронтовиксен семьисене пулăшатпăр

СЕНТЕРВАРРИ. Фронтовиксен семьисене пулăшасси Шуршăл ялсоветне кĕрекен «Çĕнĕ ял» колхозри колхозниксем хушшинче те анлăн сарăлса пырать. Колхозниксем хушшинче кĕске вăхăтрах 128 килограмм çĕрулми, 41 килограмм купăста, 55 тенкĕ укçа, 8 литр сĕт, 6 килограмм сухан тата ытти япаласем те пустарнă. Колхоз 100 килограмм çăнăх, 15 килограмм пăрçа, 4 килограмм çу, 80 килограмм купăста, 500 тенкĕ укçа, 300 килограмм çĕрулми тата 6 килограмм сухан уйăрса панă.

Фронтовиксен семьисене пулăшасси малалла пырать.

И. Осипов.

Спичка тата супăнь тума тытăнаççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Райпромкомбинат коллективĕ нумаях та пулмасть спичка туса кăларас ĕçе хăнăхса çитрĕ. Ку ĕçе ятарласа курсран вĕренсе тухнă Тихутова юлташ ертсе пырать. Малтанлăха сăнамалла туса кăларнă спичкăсен пахалăхĕ лайăх. Çитес кунсенче ăна массăллăн туса кăларма тытăнаççĕ.

Райпромкомбинатăн тепĕр предприятийĕнче супăнь туса кăларакан цеха ĕçе яма хатĕрлесе çитереççĕ. Специалистсем тупса хатĕрленĕ. Супăнь тума малтанлăха чĕртавар та çителĕклĕ.

Лашасем пе тĕрĕс усă курассишĕн

Лашасене тĕрĕс пăхни, вĕсемпе усă курассине тĕрĕс йĕркелесе пыни паха результатсем парать. Кувакино районĕнчи «Çутталла» колхозра тĕрлĕрен ĕçлекен конюхсем пур. Е. Силаева темиçе çул хушши ĕнтĕ конюх пулса ĕçлет. Лашасем начарланса вилни е кĕсресем хăм пăрахни унăн пĕрре те пулман. Çак вăхăтрах ытти витесенче ĕçлекен конюхсен япăх ĕçне пула февраль уйăхĕнче çеç 4 лаша начарланса вилнĕ, пĕтĕ кĕсресем те хăм пăрахни пулнă.

Мĕнле ĕçлет-ха Е. Силаева юлташ? Конюх Е. Силаева лашасемпе ĕçре усă курас йĕркене лайăх пĕлет. Хăш лаша çулталăк хушшинче мĕнле ĕçре пулнине те пĕлет вăл. Хăш кĕсре хăçан пĕтĕленнине те, хăмлас вăхăт хăçан çитессине те, хăш кунран (хăмлаччен икĕ уйăх малтан) пĕтĕ кĕсрене ĕçрен пачах хăтарса тăратмаллине те Е. Силаева юлташ пĕлсе тăрать. Хăмлас вăхăт çывхарса пынă май вăл пĕтĕ кĕсрене çăмăлтарах ĕçе куçарса пырать, лайăх пăхать, лайăх тăрантарать.

Анчах пур конюхсем те çакăн пек лайăх астуса тăма пултараймаççĕ. Çавăнпа та çамрăк конюхсен витесенче кашни пĕтĕ кĕсре тăрăх çавăн пек даннăйсене кăтартакан список (случной реестр) туса çакмалла. Хăш кĕсрепе усă курас тĕлĕшпе йăнăшсем пачах пулмалла мар. Е. Силаева юлташ кăна асра тыткаласа тăрать. Пĕтĕ кĕсресене вăл ăшă шывпа шăварать, утă-улăм панă чухне тĕрĕслет: çук-и унта пăнтăхнă, е çĕрĕк, е тата шăн утă? Хăмлас умĕнхи уйăхсенче вĕсене уçăлтарма илсе тухнине-тухманнине асăрхать.

Кĕсресене ĕçе янă чухне Силаева юлташ яланах асăрхаттарать: «Эсĕ, Гриша, асту, чарусăр ан тыткала, касартăк ан чар, ытла хăвăрт ан пăр, йывăр ĕçре пулăш ăна, кĕперсем урлă уттарса каçар, тăвайкинчен хăпарас умĕн чарса сывлăш çавăрттар, аялалла аннă чух çавăтса ан. Кăмăллăн тыткала, ан кăшкăр. Хăмăт-йĕнерчĕк тĕрĕс, виçеллĕ пулнине асăрха», — тет вăл пĕтĕ кĕсрепе ĕçе каякана.

Улатăр районĕнчи «Заря» колхозра 69 çулхи колхозник Г. Акулов юлташ лашасене питех те юратса пăхать. Колхозра лашасем валли сĕлĕ çук пулсан та Акулов конюхăн лашасем мăнтăр. Лашасене ытти апатсемпех вăл лайăх тăрантарать тата лашасемпе ĕçре тĕрĕс усă курмалли йĕркене çирĕп пурнăçласа пырать. «Заря» колхозăн тепĕр бригадинчех лашасем йăлтах урăхла. Январьпе февраль уйăхĕсенче ку бригадăра 4 лаша начарланса çитсе вилнĕ. Мĕншĕн-ха апла? Ку вăл татах конюх хăйĕн ĕçне йĕркеллĕн туса пыманнинчен килнĕ. Лашасене кунта Д. Рузавин конюх пăхать. Вăл витере ĕçлемелли кун йĕркине пăхăнса ĕçлемест. Час-часах лашасене ĕçе çĕрле лайăх çитерсе шăвармасăр кăларса ярать. Утта каçхине лашасене виçесĕр хурса парать, ура айне ўкнĕ утта ирхине каллех лаша умне илсе хурать. Час-часах ĕçе пачах та тухмасть, çапла лашасем те час-часах апатсăр тăраççĕ.

Вата пулсан та конюх Г. Акулов хăйĕн лашисене юратса пăхать. Час-часах ăна çĕрле те витере курма пулать. Утта вăл лашасене пĕчĕккĕн, анчах час-часах парса пырать, вăхăтра тата çителĕклĕ таран шăварать. Акулов юлташ вăл пĕлет: лашасен вăй-халне ўстерсе пымашкăн вĕсене лайăх апатлани çеç мар, тата вĕсемпе ĕçре тĕрĕс усă курни те кирлĕ. Лашасене вăл ĕçе табель тăрăх ярса тăрать. Вăл табель унăн витере яланах куç умĕнче çакăнса тăрать. Колхозниксем те çав табеле пăхăнаççĕ, конюх хушнинчен иртмеççĕ. Конюх колхоз лашисемшĕн хуçа пулса тăнине кунта кашниех ăнланать. Тĕслĕхрен, март уйăхĕн 1-мĕш эрнинче лашасене ĕçе кўлмелли табель унăн çапла:

№№	Лаша ячĕ	Лаша тĕреклĕхĕ тата кĕсресем	Март 1	2	3	4	5	6	7
1.	Хурн	Начар	к	к	к	к	к	ç. ĕç	к
2.	Змейка	10 уйăх пĕтĕ	ĕ	ç	л	е	м	е	с
3.	Ласковая	вăтам ўт-пўллĕ	й. ĕç	й. ĕç	в. ĕç	й. ĕç	й. ĕç	й. ĕç	к
4.	Зайчик	вăтам ўт-пўллĕ	в. ĕç	й. ĕç	в. ĕç	ыв.	к	в. ĕç	в. ĕç
5.	Сокол	вăтам ўт-пўллĕ	й. ĕç	й. ĕç	в. ĕç	й. ĕç	й. ĕç	к	в. ĕç
6.	Быстрая	начартарах ўт-пўллĕ	в. ĕç	в. ĕç	к	ç. ĕç	в. ĕç	в. ĕç	к
7.	Лысуха	„	ч.	ч.	ч.	ç. ĕç	ç. ĕç	ç. ĕç	ç. ĕç
8.	Гнедая	7 уйăх пĕтĕ	ç. ĕç	в ĕç	ç. ĕç	к	ç. ĕç	в. ĕç	в. ĕç
9.	Искра	8 уйăх пĕтĕ	к	ç. ĕç	ç. ĕç	ç. ĕç	к	ç. ĕç	ç. ĕç
10	Богатырь	вăтам ўт-пўллĕ	й. ĕç.	й. ĕç	й. ĕç	в. ĕç	й. ĕç	й. ĕç	й. ĕç

Çапла «Зайчик» ятлă лаша мартăн 4-мĕшĕнче ĕçрен ывăнса килчĕ пулсан, тепĕр кун ăна ĕçе кўлмеççĕ. Табельре ĕç мĕнлине кĕскетсе çырнă: йывăр ĕçе—й. ĕç, вăтам ĕçе—в. ĕç, çăмăл ĕçе — ç. ĕç тесе çырнă. Кану кунĕсене к саспаллипе, лаша сыва маррине ч саспаллипе паллă тунă. Кашни талăкра тата уйăх вĕçĕнче лашасем мĕнле ĕçре пулнин итогне тăваççĕ, çакă вара вăл лашасене малалла вĕсен вăйне шута илсе усă курмаллине кăтартса парать.

Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхозра лашасем мĕнле ўт-пўллĕ пулнине кашни уйăхрах пăхса тăраççĕ. Кашни лашапа кам ĕçе çўремеллине çирĕплетсе параççĕ. Кашни уйăхрах лашасене пăхса тухса акт çинче лаша тĕреклĕхне, унăн ўчĕпе чĕрнисем мĕнле пулнине, кўлмелли хатĕре паллă тăваççĕ, çаксене шута илсе вара вăл лашапа хăш ĕçре усă курмаллине кăтартса параççĕ.

Çакăн пек туни лашасемпе усă курас ĕçри обезличкăна пĕтерет, лашасене лайăхрах пăхма конюхсене хавхалантарать.

Лашасемпе усă курас ĕçри обезличкăна тĕпренех пĕтерсе, Чăваш республикинчи колхозсем туртăм вăйне ўстерсе пымалла, лашасен ĕçлес пултарулăхне çĕклемелле.

И. Рыжов,
Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн доценчĕ.

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ

ĂМĂРТКАЙĂК

ПОЭМА

4. Шкулта

Вăрçăсемпе хăрушă выçлăх
Шăлланнă, шелсĕр çавипе
Çĕршывăм тăрăх тухнă хыççăн
Лăпланчĕ пурнăç майĕпен.

Анчах та тăлăхри Хветутăн
Пăитах-ха умĕнче асап.
Ĕмĕчĕпе кăна вăл тутă,
Çав ĕмĕт çутă та таса.

Ĕмĕт чĕнет. Çапах та темшĕн
Ачан чĕриййĕ ыратать...
Ялти кулак тўлек кунсемшĕн
НЭП-а савса черкке йăтать.

Лĕх-лĕх кулать. Сухалĕ тăрăх
Черккийĕн тĕпĕ сапăнать.
Хуллен шăлать вăл хăйĕн чурăс, -
Тымарлă аллипе ăна.

Айда, пехле! Эсĕ Хветутăн
Алли çине пăрахнă чул
Часах ак килсе çапĕ кутăн,
Нумая пымĕ сан кунçул.

Çав чул чи йывăр тарăху пек
Çўрет Хветутăн хĕвĕнчех.
Сан шăнăрлă пуçна вăл тупĕ,
Унтан тараймăн пит инçех.

...Кĕр кунĕ çитрĕ. Çил хастаррăн
Килсе шаккарĕ çенĕке.
Шалти çут ĕмĕт чĕннипе
Хветут кăçал тытма шутларĕ
Алла пур хут та кĕнеке.

Антив, сив çил туртса силлетĕр
Сĕр саплăк хунă сăхмана.
Хветут халь шикленмест пĕрре те,
Шкула каймашкăн тумланать

Шкул алăкне уçса хăюллăн
Ялан çўренĕ пек кĕрет.
Шăв-шавпала шкул сурчĕ тулнă,
Çурхи вĕлле пекех кĕрлет.

Кĕрет учитель. Куçлăх витĕр
Темле хăтăрас пек пăхать.
—Ачсемĕр,—тет,—шавлатăр питĕ,
Вĕлле часах ак шăпланать.

Унтан учитель кăшт йăпатнăн,
Кăшт çирĕппĕн, кăшт вашават,
Ыйтма пуçлать ак: кам мĕн ятлă,
Мĕнле кашнийĕн хушамат.

Кунта ун куçĕсем Хветутăн
Куçĕсемпе тĕл пулсанах,
—Орлов,—тет лешĕ пигĕ хыттăн,
Çаплах калать вăл, кулса мар.

Учитель ун çине вăрахăн
Пăхать хайхи, шалт тĕлĕнсе.
Кунта çырма та вăл пăрахрĕ,
Ручки ун ўкрĕ аллинчен.

«Мĕнле Орлов?»—шутлать хăй тĕллĕн,
Шутлать те темĕскер кĕтет.
Ун ашшĕ пулнă-ске—кам пĕлмĕ?—
Ялти чи ятсăр Мĕкĕте.

Унтан Хветутăн хура куçĕ
Кăшт та сикменнине курă.
Учитель çирĕппĕн те уççăн
«Орлов» тесе çырса хурать.

Мĕнех вара—пул ăмăрткайăк. —
Шутлать учитель ăшĕнче.
Хушамату питех те лайăх,
Хута хастаррăн вĕрен çеç.

Антив.—ача маттур эс, çивĕч,—
Чăвашăн пултăр хушамат.
Сапла Орлов Федот Никитич
Йыша пĕр танăн хутшăнать.

Ун чĕринче хай ăмăрткайăк,
Мучи юптарнă ыр юмах,
Кĕрсе вырнаçнă пурăнмалăх
Йăва хывса яланлăхах.

(Малалли пулать).

Малалли. Пуçламăшĕ 61-мĕш, 62-мĕш тата 64-мĕш номĕрсенче.

КАЛЛЕХ ЭП ПУЛĂП САНПАЛА

(Ю Р Ă)

Килет, килет вăл вăхăт,
Каллех эп пулăп санпала.
Хапха уçма эс тухăн
Ял вĕçĕнчех курса мана

Куçа хупмасăр пăхăп:
Пĕр именсе,
Пĕр хĕрелсе,
Эс пырăн манăн ытама.

Вĕри куççулĕ витĕр
Эп курăп санăн чĕрўна.
Ман юн ăшшийĕ витĕ
Сан çамрăк, çепĕç кăкăрна.

Эп кĕтнĕ ĕмĕт çитĕ:
Эс — пулăн ман,
Эп — пулăп сан,
Пире ачашлĕ самана.

Анчах малтан эп ыйтăп:
«Çак вăрçă пынă вăхăтра,
Хăш вут-хĕмре эс пултăн,
Е лартăн шиклĕн пытанса».

Эп кĕтĕп хытă, хытă:
Тапмĕ чĕрем,
Юхмĕ юнăм, —
Эп кĕтĕп эс мĕн каласса.

Тен эс нимех каламăн,
Пуçна çеç усăн вăтанса.
Вара эп хам ăнланăп:
«Ма сутрăн, тейĕп, эс мана».

Çавăрăнса эп утăп:
Эс — манăн мар,
Эп — санăн мар,
Каяш эс пулăн пурнăçра.

Тен эс вăтанмăн, калăн:
«Сăмахпа мар, курса ĕнен».
Вара эп хам ăнланăп:
Эс пулăн манăн çут телей.

Сана эп тин ыталăп:
Пĕр савăнса,
Пĕр хумханса,
Парнелĕп хамăн чĕреме.

П. Çиçĕм.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

ÇАР ÇЫННИСЕН ÇЕМЬИСЕНЕ ПУЛĂШНИ

Ленинград райсовечĕсенче çар çыннисен çемьисене государство енчен пулăшас тата вĕсен пурнăç условийĕсене аванлатас тĕлĕшпе уйрăм отделсем ĕçлеме пуçланă. Çар çыннисен çемьисен пурнăçне лайăхлатас ĕçре комсомолецсем хастарлă ĕçлеççĕ. Иртнĕ çулхи пример тăрăх комсомолецсенчен килти пурнăç тĕлĕшпе ĕçлекен отрядсем туса хунă.

Кĕске вăхăт хушшинчех çĕнĕ отделсем пысăк ĕçсем тума ĕлкĕрнĕ. Февраль уйăхĕнче фронтовиксен 1.200 çемьине пĕр вăхăтлăх укçа парса пулăшнă. 1.200 ачана ача учрежденийĕсене вырнаçтарнă. Çипуçпа ал-урана тăхăнмаллисем илме 17.700 ордер валеçсе панă. (ТАСС).

ИРĔКЕ КĂЛАРНĂ РАЙОНСЕНЕ ПĔТĔМ ÇĔРШЫВ ПУЛĂШАТЬ

Казахстан ĕçхалăхĕ Сталинград хулине юсама укçа-тенкĕ пухать. Красногорск районĕнчи «Актерек» ялхуçалăх артелĕн председателĕ Тулейбергенов 45.000 тенкĕ укçа хывнă. Ун хыççăн ытти колхозниксем те çавăн пекех укçа хывнă. Ку тарана çити 230.000 тенкĕ укçа пухнă. Ворошилов ячĕпе хисепленекен артель колхозникĕсем хулагероя юсама 140.000 тенкĕ пухнă. Петропавловск хулинчи ĕççыннисем 713.000 тенкĕ пухнă.

Молотов облаçĕнчи Гайнски районри вăрман касакан колхозниксем Сталинград хулине юсама планран ытлашши 20.000 кубометр вăрман хатĕрлеме пулнă.

Бакури трикотаж комбиначĕн кĕпе-йĕм цехĕнчи стахановкăсем ирĕке кăларнă районсенчи ачасем валли темиçе кун хушшинче 2.500 свитер, майка тата ытти япаласем те туса хатĕрленĕ. (ТАСС).

ЛИТЕРАТУРĂН ГОСУДАРСТВО ФОНЧĔ

Совет Союзĕнче фашистсем аркатса тăкнă библиотекăсене тепĕр хут йĕркелеме РСФСР Наркомпросĕ çумĕнче литературăн государство фондне тунă. Çав фондра 4 миллионтан кая мар кĕнеке пулать. Вĕсем, Мускавсăр пуçне, государство фончĕн 34 филиалĕнче: Ленинградра, Свердловскра, Саратовра, Уфара, Горькире тата ытти пысăк хуласенче те пулаççĕ.

Литературăн государство фондне кĕнекесем пур библиотекăсем те, пур аслă шкулсем те уйăрса памалла. Кунсăр пуçне фонда çĕнĕрен тухакан кĕнекесем хутшăнаççĕ. Вĕсене илме 3 миллион тенке яхăн укçа уйăрса хунă. (ТАСС).

Тĕрĕсленсе килнĕ материалсем тăрăх

«Чăваш Коммуни» редакцине Вăрмар районĕнчи «Победитель» колхозăн ĕçри çитменлĕхсем çинчен çырнă çыру килнĕччĕ. Унта çапла каланăччĕ: «Победитель» колхоз çуракине тухма нихăш енчен те хатĕрленсе çитмен. Çуракинче кирлĕ ялхуçалăх машинисене юсама тытăнман çеç мар, колхозăн тимĕрçĕ те çук. Колхозри лашасен 50 проценчĕ кўлме юрăхсăра тухнă пулин те, правлени çак çитменлĕхе пĕтересси çине çавăрăнса пăхмасть. Çавăн пекех лаша кўлмелли япаласем те çитмеççĕ, вĕсене юсаса çĕнетес ĕçе халĕ те тытăнман. Паянхи куна çитсе те пĕлтĕрхи авăна çапса пĕтермен. 80 гектар çинчи вăрлăхлăх клевера çапса пуçтарман.

Редакци вăл çырăва Вăрмар районĕнчи çĕрĕç пайне янăччĕ. Райçĕрĕç пайĕ çапла пĕлтерчĕ: çырура кăтартнă çитменлĕхсем пулнă, колхоз правленине çав çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтерсе, çуракине тивĕçлипе хатĕрленсе тухма хушнă.

Ют çĕршывсенче

АНГЛИ САМОЛЕЧĔСЕМ НЕАПОЛЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, мартăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин йывăр бомбардировщикĕсем Неаполь çине вĕçсе пырса тапăннă. Мартăн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух тата мартăн 22-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем Морлэри (Хĕвеланăç Франци) чугунçул виадукĕ çине бомбăсем пăрахнă.

КАНАДĂРИ СЫВЛĂШ-ÇАР ВĂЙĔСЕН ПЫСĂК УШКĂНĔ АНГЛИЕ ПЫРСА ÇИТНĔ

ОТТАВА, мартăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Шанчăклă ушкăнсенче пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 20-мĕшĕнче Англие Канадăри сывлăш-çар вăйĕсен салтакĕсемпе офицерĕсен çĕнĕ ушкăнĕ пырса çитнĕ, вăл вăрçă пуçланнăранпа пынă ушкăнсенчен чи пысăкки пулса тăрать.

БАРАНОВИЧРЕ ФАШИСТЛА ПАЛАЧСЕНЕ ВĔЛЕРНИ

СТОКГОЛЬМ, мартăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). «Мюнскер цейтунг» ятлă гитлерла хаçат пĕлтернĕ тăрăх, совет партизанĕсем Барановичре хулари гитлерла «главнăй комиссара» Фридрих Фенча тата «охраннăй отряд» пуçлăхĕсенчен пĕрине вĕлернĕ.

ЛИОНРИ ПĂЛХАВСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). 7 пин рабочие Германие яма арестленĕ пирки мартăн 15-мĕшĕнче Лионри вокзалта демонстраци пулса иртнĕ. Вокзала эсэсовецсем тата жандармсем çавăрса илнĕ. Çав тери çиленсе кайнă халăх ушкăнĕнчен çапла кăшкăрнисем илтĕннĕ: «Тĕп пултăр Петэн! Лавале юпа çине!». Демонстрантсем хушшинчен нумайăшне арестленĕ.

Алжирти радио пĕлтернĕ тăрăх, Лионра каллех пăлханусем пуçланса кайнă. Урамсенче пулнă çапăçусенче темиçе нимĕç офицерне вĕлернĕ. Оккупациллĕ войскăсемпе çапăçни тата урам хушшинчи демонстрацисем Францин ытти хулисенче те пулса иртеççĕ. Вăл демонстрацисене хĕрарăмсем нумай хутшăнаççĕ. Вĕсем хăйсен упăшкисене, ывăлĕсене тата хĕрĕсене Германие ĕçлеме илсе каяссине хирĕç протестлеççĕ.

ХРОНИКА

СССР Совнаркомĕ **А. Е. Корнейчук** юлташа Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ пулма уйăрса лартнă.

* * *

СССР Совнаркомĕ **С. Ш. Козырев** юлташа Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн генеральнăй секретарĕ тата коллеги членĕ пулма уйăрса лартнă.

Пĕлтерў

Мартăн 25-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) Горкомĕн Парткабинетĕнче (Чувашская ур., 6) Сталин юлташăн 1943 çулхи февралĕн 23-мĕшĕнчи приказне вĕренес тĕлĕшпе пропагандистсем валли **«Хĕрлĕ Çар нимĕç захватчикĕсемпе кĕрешсе çуралнă тата ўссе çирĕпленнĕ»** ятлă 1-мĕш темăпа семинар пулать.

Семинара ВКП(б) Горкомĕн лекторĕ-консультанчĕ **А. И. Воробьев** юлташ иртерет.

Пропагандистсен обязательно пымалла.

ВКП(б) Горкомĕн Парткабинечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Военнослужащисен çемьисем панă жалобăсене вăхăтра тата тĕрĕс пăхса тухмалла

Совет правительстви военнослужащисен çемьисемпе отечественнăй вăрçă инваличĕсене пенсисемпе пособисем парса тăрать, тĕрлĕ укçа тўлевĕсемпе налогсенчен хăтарать, льготăсем парать, çарти çынсен çемьисемпе вăрçă инваличĕсене льгота памалли закона пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пыма хушать. Ку ĕçре финанс оргăнĕсен ответлăхĕ питех те пысăк. Çарти çынсен пĕр çемьи те, пĕр инвалид та закон тăрăх паракан льготăсене илмесĕр ан юлтăр тесе, финанс оргăнĕсен вирлĕн ĕçлемелле.

Анчах тĕрĕслў çакна кăтартрĕ: ĕççынни депутачĕсен район совечĕсен хăшпĕр финанс отделĕсем ĕççыннисене закон тăрăх памалли льготăсене памасăр тăраççĕ тата çарти çынсен çемьисем панă жалобăсене вăхăтра пăхса тухмаççĕ, налогсем тăрăх тĕрĕс мар пухса илнĕ укçа-тенкĕне каялла тавăрса парассине вăраха тăсса пыраççĕ.

Тĕслĕхрен, Комсомольски райфинотделĕ (заведующийĕ Кадкин юлташ) пособи илсе тăракан К. Фомина, И. Капитонова, М. Павлова, С. Леонтьева юлташсен çемьисене военнăй налог тўлеттермелле туни тĕрĕс мар. Красноармейски райисполкомăн финанс отделĕ пособи илсе тăракан çемьесене—тăватă ачаллă Ольга Петровнăна, виçĕ ачаллă Анисия Алексеевнăна тата Мария Федоровнăна военнăй налог тўлеттермелле тунă.

Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариачĕн ревизорĕ çак фактсене вырăна тухса тĕрĕслерĕ. Ун хыççăн ку йăнăша хăвăрт тўрлетнĕ. Анчах эпир çакăн пек çитменлĕхсем урăх нихăш районра та çук тесе калама пултараймастпăр.

Çарти çынсен çемьисем паракан жалобăсене, вĕсене татса пама урăх нимĕнле материалсем те кирлĕ мар пулсан, çав кунах пăхса тухмалла, жалобăсене татса пама ытти материалсем кирлĕ пулсан, вĕсене 7 кунлăх срокран кая юлмасăр пăхса тухмалла.

Финанс отделĕн кашни руководителĕ, кашни налог инспекторĕ çакна асра тытмалла: военнослужащисен çемьисене законпа пăхнă льготăсене вăхăтра тата тĕрĕс пани, вĕсен жалобисене ăшшăн йышăнса, вăхăтра тата тĕрĕс пăхса тухни вăл — фронта пулăшниех пулать, тĕрĕсрех каласан, ылханлă тăшмана аркатса тăкас тĕлĕшпе тăвакан пĕрлехи ĕçре пулăшни пулать.

Анчах финанс отделĕсен заведующийĕсемпе налог инспекторĕсем хушшинче çак чăнлăха ку таринччен ăнланман çынсем, çавна пула ку ĕçе вăрăма тăсакан, наянланса тата бюрократланса кайнă çынсем тупăнаççĕ-ха.

Йĕпреç районĕнчи Тури Клеш ялĕнче пурăнакан Е. А. Павлова (военнослужащин арăмĕ) унăн çемьи льготăпа усă курма тивĕçли çинчен, налог тĕрĕс мар хуни çинчен 1942 çулти декабрĕн 10-мĕшĕнчех жалоба çырнă. Ку жалоба Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариатне декабрĕн 18-мĕшĕнче çитнĕ. Наркомфин çав кунах Йĕпреç райфинотделĕнчен (заведующийĕ Плотников, старши налоговăй инспектор Львов) Павлова юлташăн çемьине налог хума юранипе юраманнине çирĕплетсе паракан материалсене ярса пама ыйтнăччĕ.

Пăрачкав районĕнчи Ряпино ялĕнче пурăнакан Т. И. Козленкова юлташ та унăн çемьине налог тĕрĕс мар тўлеттерни çинчен пĕлтĕрхи декабрь уйăхĕн пуçламĕшĕнчех жалоба панă. Наркомфин декабрĕн 10-мĕшĕнче Пăрачкав райфинотделне çак жалобăна тĕрĕслесе мерăсем йышăнма хушнă. Анчах райфо заведующийĕ Глубников юлташ паянхи кунччен нимĕнле материалсем те ярса памарĕ-ха. Çĕмĕрле районĕнчи Мăн Улхашра пурăнакан М. И. Сычева юлташăн жалобине райфо заведующийĕ Облизанцев, старши инспектор Коротнов пĕр уйăх хушшинче те татса паман. Военнослужащисен çемьисемпе вăрçă инваличĕсем паракан жалобăсем çине чунсăрла пăхассине, Элĕк тата ытти хăшпĕр райфинотделсенче те пĕтермен-ха. Унти финанс отделĕсен заведующийĕсемпе налог инспекторĕсен çак çитменлĕхе хăвăрт пĕтермелле.

Финанс отделĕсен заведующийĕсемпе налог инспекторĕсем апрелĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр налог тўлекенсен списокĕсем тăрăх çарти çынсен çемьисемпе вăрçă инваличĕсене укçа тўлевĕсемпе налогсем тăрăх льготăсем тĕрĕс тата пĕтĕмĕшпех панине тепĕр хут тĕрĕслесе тухмалла. Ку ĕçе ялти пĕтĕм актива явăçтармалла.

Финанс отделĕсен вунă кунлă срокра военнослужащисен çемьисене льгота парас ыйту тăрăх предприятисенчи, учреждениcенчи тата организацисенчи учетнăй работникĕсен инструкциллĕ канашлăвĕсене ирттермелле. Кунпа пĕрлех вĕсем льгота тĕрĕс парса тăнине тĕрĕслесе тăмалла.

Закон тăрăх льгота илме тивĕçлĕ çынсем льготăсăр юлнине тĕл пулсанах, ăна тĕплĕн пăхса тухмалла: льгота памалла пулсан — çийĕнчех памалла, тĕрĕс мар пухса илнĕ налог укçипе ытти тўлевсене çийĕнчех тавăрса памалла.

Районсемпе хула совечĕсен финанс отделĕсенче çар çыннисен çемьисем паракан жалобăсене уйрăмăн шута илсе пымалла. Вăл жалобăсемпе заявленисене финанс отделĕсен заведующийĕсен тўрремĕнех хăйсен пăхса тухмалла. Вĕсен жалобăри ĕçе татса пама татăклă срокçем кăтартмалла, тивĕçлĕ решенисем йышăнмалла.

Руководительсен жалоба паракансене хăйсен йышăнса, вĕсемпе калаçмалла, çийĕнчех тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла. Военнослужащисен çемьисене льготăсем памалли йĕркене пăсакансене тата ĕççыннисен жалобисене, уйрăмах çарти çынсен çемьисем паракан жалобăсене пăхса тухмасăр вырттаракан çынсене тивĕçлипе ответ тыттармалла.

И. ЗОЛОТНИКОВ.
Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕ.

Чăваш АССР-ĕнчи Госкредитпа гострудсберкассăсен управленийĕ çумĕнче государство заемĕсем выляса илнипе илменнине тĕрĕслекен бюро ĕçлет.

Çак бюро ĕçĕпе усă курас текенсен (облигаци тытакансен) уйрăм карточка çырса тултарас пулать. Унта облигаци серийĕн номерне, мĕнле заемне тата почта адресне кăтартас пулать. Çырнă карточкăсене управленине яма сберкассăна памалла.

Карточкăсене кирек хăш сберкассăра та 15 пус укçа тўлесе илме пулать. Карточкăсем тўлевсĕрех çўреççĕ.

Чăваш АССР-ĕнчи Госкредитпа гострудсберкассăсен управленийĕ.
3—3.

Чăваш АССР Наркомпросне бухгалтер-ревизор, статистик, управделами тата машинистка кирлĕ.
3—2

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен управленине ялан ĕçлеме главнăй тата старши бухгалтерсем кирлĕ. Ĕçукçи килĕшнĕ тăрăх.
Çак адреспа ыйтмалла: Шупашкар, Герцен урамĕ, 9. Телефон 7—13.

Заготскотăн Чăваш конторинче ĕçлеме главнăй бухгалтерăн заместителĕ, старши бухгалтерсем, бухгалтер-ревизорсем, çавăн пекех тата районсенче ĕçлеме главнăй бухгалтерсем васкавлăн кирлĕ.
Çак адреспа ыйтмаллла: Шупашкар, Чăваш урамĕ, 21. Телефонсем: 3—16, 6—12.
2—1.

СССР Наркомзагĕн Чăваш АССР-ĕнчи Уполномоченнăйне ялан ĕçлеме инспекторсем, экономистсем, статистиксем кирлĕ.
Çак адреспа ыйтмалла: Шупашкар, Атăл Набережнăйĕ, 13.

ЧАССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕ НКВД сотрудникĕ — милици капитанĕ
Николай Васильевич ПРОКОПЬЕВ
вăхăтсăр вилни çинчен хурланса пĕлтерет.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

ПТ 597 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧА ССР. Заказ № 2 Ф. б. 58. 42 п.